**Дмитриева Вероника Трифоновна, учитель чувашского языка и литературы.**

**Мастер -класс**

**Тĕрлĕ шайри вĕрентӳ меслечĕ «Ăстаçă- вĕрентекен.**

Пирĕн шкулта пĕтĕмпе 1000 ытла ача вĕренет, 400 ытла пуçламăш классенче, 500 ытла вăтам классенче, 88 аслă классенче.
Пусламăш классенче вĕренекенсем пурте тăван чĕлхе - чăваш чĕлхи вĕренеççĕ. Ашшĕ-амăшĕсем çакăн пек йышăннă. 5-9 классенче 526 ачаран 402 –шĕ чĕваш чĕлхи суйласа илнĕ. 120 ача яхăн вырăс чĕлхи. 5-8 классем пурте чăваш чĕлхи суйласа илнĕ ку пире питĕ савăнтарать татах та тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать.
Анчах та чăваш чĕлхине суйласа илнĕ ачасем хушшинче вырăсла кăна калаçакан çемьери ачасем те пур. Вĕсем чăвашла калаçнине пачах та илтмеççĕ.Çакăн пек вĕренекенсене урокра та килти ĕçсене тума та йывăртарах.
Эпир ăнланатпăр, ачасен пурин те лайăх вĕренес килет, лайăх паллăсем вĕсене хавхалантараççĕ.
Çакăн пек лару- тăрура уйрăмах тĕрлĕ шайра ĕлкĕрсе пыракан ачасем валли хатĕрленĕ ĕçссем пулăшаççă. Ку меслете усă курнă чухне эпă ачасене икĕ ушкăна уйăратăп. Хăш ушкăнра пулмаллине ачасем хăйсем суйласа илеççĕ.
Пĕрисем ăстаçăсем- йывăртарах ĕçсене пурнăçлаççĕ, теприсем- вĕренекенсем-вĕсен çăмăлтарах ĕçсем.
Чи пысăк хак ăстаçăн – «5», вĕренекенĕн – «4». Ку ĕçсене пурнăçланă чух ачасен нимĕнле йывăрлăх та пулмалла мар. Вĕсем хăйсем пултаракан ĕçсене пурнасласççĕ. Анчах та хуть хăш вăхăтра та «вĕренекен» ăстаçăн шайне куçма пултарать, енчен те ăстаçăн йывăрлăхсем пулчĕç пулсан вăл «вĕренекен» патне куçать. Шкул ачин, паллах, ытларах «вĕренекентен» ăстаçă патне куçас килет.
Ку ĕç ачасене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме хавхалантарать тата вĕсен пĕлĕвне те ӳстерет.
Сăмахран «Çемье» темăна вĕреннĕ чух 5 класра çакăн пек ĕç пама пулать
**Вĕренекен**
**«Çемье» темăпа çыхăннă сăмахсене тупса çырса илĕр.**
**Ăстаçă**
**Текстра çемьере кам-кам пуррине тупса çырса илĕр. Вырăсла куçарăр..**
**Пирĕн çемье.**
Халĕ эпир ушкăна пайланатпăр, пĕрисем-ăстаçăсем, теприсем-вĕренекенсем.
3 минут хушшинче пурнăçламалла.
Паллах, ку меслетпе усă курнă чух ачана хайне суйласа илме ирĕк памалла.Кам вăл пуласшăн, ăстаçă е вĕрентекен.
Ача тăрăшса ĕçленине кура тата вăл тăрăшса ĕçленине кура тата вăл лайăхрах ĕлкерсе пынине шута илсе «вĕренекене» те «5» паллă тепĕр чухне лартса паратăп.Ку начартарах вĕренсе пыракан ачана тата тăрăшарах вĕренме хистет.
Эпĕ суйласа илнĕ меслет чи малтанах ача мĕнле ĕлкĕрсе пыма пултарнине кăтартса парать, ачана малалла аталантарма пулăшать. Тĕрлĕ шайра ĕлкĕрсе пыракан ачасен пĕлĕвне ӳстеме май парать.
Вĕрентекен маларах ачасен пĕлĕвне хакламалли ĕçсем хатĕрлесе хурсан ку меслетпе ытти уроксенче те усă курма пулать. Веçех вĕрентекен пултарулăхĕнчен килет.

**Вĕренекен**

**«Çемье» темăпа çыхăннă сăмахсене тупса çырса илĕр.**
Атте, кушак, анне, аппа, шăллăм, вăрман, кукаçи, хĕвел,, кукамай, асатте, йăмăк, чечек.

**Ăстаçă**

**Текстра çемьере кам-кам пуррине тупса çырса илĕр. Вырăсла куçарăр..**
**Пирĕн çемье.**

Эпир тăваттăн пурăнатпăр. Эпĕ, атте, анне тата йăмăк. Атте-инженер. Вăл стройкăра ĕçлет. Анне фабрикăра ĕçлет. Вăл бухгалтер. Йăмăк ача садне çӳрет. Эпĕ вара иккĕмĕш класра вĕренетĕп.

Эпир килте, хурсем, чăхсем усратпăр. Пирĕн тата Улайкка ятлă йытă пур.